Материал представлен из коллекции электронной библиотеки «Писатели Чувашии – детям» – **pchd21.ru**
Электронная библиотека создана Чувашской республиканской детско-юношеской библиотекой **– www.rdub21.ru** – на средства гранта Президента Российской Федерации для поддержки творческих проектов общенационального значения в области культуры и искусства

**Автор: Растворцев Андрей Васильевич**

**Книга: Хранители очага**

# Рассказ: Çумăр

Çеруш асламăшĕ патне яла килчĕ. Каникул кунĕсене irttерме. Пĕрремĕш класс пĕтернишĕн вăл питĕ савăнать, мăнаçланать. Халĕ ĕнтĕ вăл питĕ ăслă, ăна нимпе те тĕлĕнтереймĕн. Çеруш сĕтел хушшинче ӳкерсе ларатчĕ. Сасартăк тулта тем шавлама пуçларĕ. Арçын ача чӳречерен пăхрĕ. Урамра çумăр çăвать иккен. Тепĕр чӳречерен вара хĕвел шăрантарса пăхать. «Ун пек пулма пултараймасть-çке», – терĕ те ăшĕнче Çеруш крыльца çине тухрĕ. Çумăрăн шултра тумламĕсем тусанлă сукмак çине çеç ӳкеççĕ, анчах малалла каймаççĕ. Асламăшĕн çерем çинче курăк çисе çӳрекен хурĕсем пĕр-пĕрин çине тĕлĕнсе пăхаççĕ: вĕсенчен пĕрисем çине çумăр ӳкет, теприсем çине ӳкмест. Карта çумĕнче тĕлĕрсе выртакан сысна çури те ниепле те тăна кĕреймест: мĕнле-ха капла, унăн çурăмĕ çинче çумар ташлать, пуçĕ вара хĕвелпе пиçĕхет. Çеруш тĕлĕннипе кулса ячĕ, сукмак урлă чупма тытанчĕ: пĕрре унталла, тепре кунталла, пĕрре унталла, тепре кунталла. Калама çук тĕлĕнмелле вĕт-ха: пĕр енче çумăр çăвать, тепĕр енче çумасть! Кăштахран çумăр чарăнчĕ, ешĕл çерем урлă тем пысăкăш асамат кĕперĕ карăнчĕ...

Все тексты взяты из открытых источников и выложены на сайте для не коммерческого использования.
Все права на тексты принадлежат только их правообладателям.